28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ДЕКАБРЬ
2
ВЫРСАРНИКУН
234 (6985) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе
Шупашкар хула комитечĕн,
ЧАССР Верховный Совечĕн
тата Шупашкар хула
Совечĕн хаçачĕ

Информациллĕ пĕлтерӳ

Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Центральный Комитечĕн черетлĕ пленумĕ çинчен

Мускавра ноябрĕн 27—29-мĕшĕсенче Пĕтĕм Союзĕн Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Центральный Комитечĕн черетлĕ 14-мĕш пленумĕ пулса иртнĕ. Пленумра обком, крайком, союзлă республикăсенчи комсомолăн Центральный Комитечĕсен секретарĕсем те пулнă.

Пленум çак ыйтусене сӳтсе-явнă: 1) Çамрăксем СССР Верховный Совечĕн суйлавĕсене хутшăнса ĕçлесси; 2) Организациллĕ ыйтусем.

Çамрăксем СССР Верховный Совечĕн суйлавĕсене хутшăнса ĕçлесси çинчен Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Центральный Комитечĕн Секретарĕ Н. А. Михайлов юлташ доклад туса панă. Доклад тăрăх пленум тивĕçлĕ постановлени йышăннă.

Пленум Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Центральный Комитечĕн иккĕмĕш секретарĕ пулма В. Н. Иванов юлташа суйланă.

Пленумăн савăнăçлă ларăвĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ М. И. Калинин юлташ Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзне Ленин орденĕ панă. Ку ордена комсомола Совет Союзĕн гитлерла Германие хирĕç пынă Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Тăван çĕршыв умĕнче питех те паллă ĕçсем тунăшăн тата совет çамрăкĕсене Тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн парăнса пурăнма вĕрентсе пăхса ӳстерес ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн наградăланă.

Пленума пухăннă çынсем çав тери хавасланса Сталин юлташа çыру янă.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIV-мĕш пленумĕн участникĕсем Сталин юлташ патне çырнă çыру

Хаклă Сталин юлташ! ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIV-мĕш пленумĕн чаплă ларăвĕн участникĕсем, çак çырăва Сирĕн пата, юратнă Сталин юлташ, пирĕн халăхăн аслă çĕнтерĕвĕсене хавхалантарса пыраканĕ тата организаторĕ патне, тăван атте, аслă учитель, совет çамрăкĕсен чи лайăх тусĕ патне çыраççĕ.

Паян эпир пысăк награда—Ленин орденĕ илетпĕр. Çак орденпа комсомола Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче Тăван çĕршыв умĕнче çав тери пысăк ĕçсем тунăшăн тата совет çамрăкĕсене Тăван çĕршыва чун-чĕререн юратма вĕрентсе пырас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунăшăн наградăланă.

Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи фашистла нимĕç захватчикĕсемпе Япони империалисчĕсене тĕппипех çĕнтернипе вĕçленчĕ. Большевикла тăван парти ертсе пынипе пĕр иккĕленмесĕр çирĕппĕн пынипе пула паттăр совет халăхĕ усал тăшмана çав тери вăйлăн аркатса тăкма пултарчĕ. Тăван çĕршывшăн йывăр вăхăтра Эсир, пирĕн тăван атте тата учитель, Совет Союзĕн аслă тата шанчăклă çулпуçĕ совет халăхĕн кĕрешĕвне ертсе пыни пирĕн халăхшăн пысăк телей пулса тăрать.

Совет халăхĕпе унăн паттăр Хĕрлĕ Çарĕ тунă историллĕ çĕнтерӳ пирĕн çамрăксен кунçулĕпе пуласлăхне упраса хăварчĕ. Çамрăксен умне творчествăллă ĕçĕн анлă горизончĕсем тухса тăчĕç, вĕсен пултарулăхĕпе таланчĕсене прĕклĕн аталантарма, вĕренсе пыма çулсем уçăлчĕç. Ĕççыннисене эксплоатацирен хăтарса, пĕтĕм пурлăха халăх аллине илсе панă пирĕн çĕршывра кăна çамрăк ăрăва наукăн, искусствăн, культурăн çиçсе тăракан сӳллĕшне çити хăпарма ăстăн аталанăвĕпе нравственность илемĕн чи лайăх палăрмăшĕсем патне çитме май панă. Пирĕн хыççăн пурăнакан нумай ăрусем Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче совет çамрăкĕсен паттăр ĕçĕсене тĕлĕнсе тата тав туса аса илĕç. Йывăр çулсенче социализмлă Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртнипе пирĕн ăру савăнса тăрать.

Совет халăхĕнчен виççĕмĕш награда—виççĕмĕш орден илни комсомолшăн пысăк чыслăх пулса тăрать тата пысăк ответлăха пĕлтерет.

Çак аслă награда миллионшар совет çамрăкĕсене унăн ăс-тăнĕпе вăйне çав тери пухса ĕçленĕ çулсене аса илтерсе тăрĕ. Вăл çулсем салтакăн йывăр тата хăрушă ĕçĕ çинчен, вăхăтлăх ăнăçсăрлăхсен салхулăхĕпе аслă çĕнтерӳсен савăнăçĕ çинчен, заводсенчи станоксемпе аманнă боец койки умĕнче ыйхăсăр иртнернĕ çĕрсем çинчен, Хĕрлĕ Çар валли планран иртерсе туса паракан хĕçпăшал хатĕрлеме тата Хĕрлĕ Çар валли тырă туртарас тĕлĕшпе иртнернĕ субботниксемпе воскресниксем çинчен, тăрăшса вĕреннипе ĕçĕн çĕнĕ меточĕсене шырани çинчен, вăрçă вăхăтĕнчи çĕнĕ стройкăсемпе канма ларнă кĕске минутсем çинчен аса илтерĕç.

Аслă наградăна алла илсе эпир тăшмана хирĕç кĕрешсе хăйсен пурнăçĕсене хунă халăхăн шанчăкла ывăлĕсемпе хĕрĕсен ячĕсем умĕнче, хамăрăн тантăшсен чыслă ятне асăнса хамăр ялавсене таятпăр. Хамăр Тăван çĕршыв прĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Ленин орденне эпир иртнĕ вăхăтра тунă ĕçсемшĕн паракан награда вырăнне хурса çеç мар, малалла та, Ленинпа Сталин партине чун-чĕререн парăнса ĕçлеме хатĕр пулнине кăтартса паракан обязательство вырăнне хисеплесе илетпĕр.

Ленин орденне илсе, пĕтĕм хамăрăн вăйсене тата пĕлӳлĕхе Совет державин çарпа экономикăллă хăватне çирĕплетессишĕн пама хатĕр пулни çинчен Сирĕн умăрта эпир тупа тăватпăр, Сталин юлташ. Вăрçă кӳнĕ сурансене хăвăртрах сиплесе, халăх хуçалăхĕпе культурин пур енĕсене те çĕнĕрен çĕклессишĕн эпир ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме пулатпăр.

Вăрçăн йывăр кунĕсенчен совет çыннисен çамрăк ăрăвĕ тата çирĕпрех, тата вăйлăрах пулса тухрĕ. Большевиксен партийĕ кăтартса паракан тĕллев патне пынă çĕрте пире ниепле йывăрлăхсем те чарса тăрас çук.

Ленин орденне илсе, пĕтĕм совет çамрăкĕсен ячĕпе эпир, коммунизмăн аслă ĕçĕшĕн пĕр иккеленмесĕр кĕрешсе пыма пулатпăр, Сталин юлташ. Çав ĕçшĕн аслă Ленин хăйĕн пĕтĕм çутă пурнăçне хунă, вăл ĕçе, Сталин юлташ, Эсир пĕтĕм чун-чĕрепе туса пыратăр.

Идейăллă пулни, принциплăх, паттăрлăх тата хăрамани—коммунизмшăн кĕрешекен аслă паттăрсен палăлăхĕсем пулса тăраççĕ. Çав палăлăхсене эпир хамăрта пĕр чарăнмасăр яланах ӳстерсе пыма пулатпăр.

Ленин орденне илсе, эпир, Сталин юлташ, Эсир паракан кăтартусене пĕр пăрканмасăр пурнăçа кĕртсе пыма, ӳссе пыракан ăрăва Ленин партине чун-чĕререн парăнса пурăнма воспитани парса тăма, çамрăксене наука çитĕнĕвĕсемпе паллаштарма, пирĕн аслă Тăван çĕршыва малашне аталантарассишĕн кĕрешме çамрăк патриотсен вăй-халне çĕклеме сăмах паратпăр. Пирĕн вăйсем, пирĕн чĕресем, пирĕн ăс-тăн пĕтĕмпех Тăван çĕршывăн аллинче. Паян эпир аслă вырăс поэчĕ Пушкин хыççăн çапла калатпăр: «Тăванăм, чун-чĕрери ырă туртăмсене Тăван çĕршыва пиллер».

Ленинла-Сталинла комсомол хăйĕн амăшне—большевиксен партине ĕлĕкхи пекех халĕ те пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăрать, малашне те çавăн пекех парăнса тăракан пулĕ. Эпир, комсомолецăн аслă ятне упрама, кирек хăçан та, кирек ăçта Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) хамăрăн тăван партине пăхăнса тăма тупа тăватпăр Сире, Сталин юлташ.

Сывă пултăр пирĕн аслă Тăван çĕршыв—Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ!

Сывă пултăр большевиксен партийĕ—Совет халăхĕн аслă çĕнтерĕвĕсене организацилекенĕ тата хавхалантараканĕ!

Пĕтĕм чун-чĕререн Сире, хаклă Иосиф Виссарионович, пĕтĕм этемлĕх телейĕшĕн нумай-нумай çулсем хушши пурăнма ырă сывлăх сунатпăр.

Сывă пултăр пирĕн юратнă, тăван Сталин юлташ!

ВЫРĂС АРТИЛЛЕРИЙĔН МУЗЕЙĔ

Хĕрлĕ Çарăн Ленинградри историллĕ артиллери музейне Пĕрремĕш Петр тунă. Çав музейре 160.000 экспонат ытла — авалхи тупăсем, çарсен ялавĕсем, тĕрлĕ йышши хĕçпăшалсем.

Музее тусанах унта хунă чи малтанхи экспонат—мортира пулнă, ăна 1606 çулта паллă вырăс мастерĕ Андрей Чохов тунă. «Царь—пушка» ятлă чаплă туппа та вăлах тунă. Çав мортирăн бронзăран тунă кĕпçи çине Петр хушнипе çапла çырса хунă: «Аслă патша çак мортира шăратма хушман», тенĕ.

Суворов Çурçĕр Италире французсенчен тытса илнĕ тупăпа юнашар унта кучухнехи тупăсем, минометсем, пулеметсем лараççĕ.

Музейри колесница (урапа) историпе художество енчен паха пулса тăрать. Пĕрремĕш Петр вăхăтĕнче çавăн чухнехи вырăс артиллерийĕн пĕртен-пĕр ялавне парадсене çав урапа çине хурса илсе тухнă. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче музее çĕнĕрен 10.000 экспонат ытла илсе пынă. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКĂРА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАС ĔÇ ДЕКАБРĔН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă панă
1. Вăрнар	110,0
2. Красноармейски	107,5
3. Муркаш	107,4
4. Чурачăк	106,6
5. Етĕрне	105,7
6. Сĕнтĕр	105,4
7. Советски	105,3
8. Шупашкар	104,3
9. Элĕк	104,0
10. Шăхасан	103,9
11. Çĕрпӳ	103,8
12. Калинино	102,9
13. Сĕнтĕрвăрри	102,4
14. Октябрьски	101,6
15. Елчĕк	96,5
16. Ишлей	96,0
17. Пăрачкав	93,7
18. Канаш	92,3
19. Вăрмар	90,2
20. Йĕпреç	87,4
21. Куславкка	85,5
22. Комсомольски	85,2
23. Хĕрлĕ Чутай	83,0
24. Улатăр	78,9
25. Первомайски	78,6
26. Тăвай	75,9
27. Чкаловски	75,7
28. Сĕмĕрле	72,9
29. Шăмăршă	61,7
30. Кувакино	49,8

* * *

Иртнĕ кунсенче эпир пирĕн республикăри вунпĕр район государствăна тырă парса татни çинчен пĕлтернĕччĕ. Паян пичетлесе кăларакан сводкăран татах тепĕр виçĕ район: Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри тата Октябрьски районсем государствăна тырă памалли хăйсен обязательствисене тултарни курăнать.

Анчах та республикăра государствăна тырă парас ĕç çителĕклĕ пырать теме çук-ха. Планран иртерсе тырă памалли обязательствăсене тултарас тĕлĕшпе ĕç вара татах та япăхрах пырать. Планран иртерсе тырă памалли обязательствăна Вăрнар районĕ çеç тултарнă.

Государствăна тырă парас ĕç çителĕксĕр пырать пулин те чылай районсенчи колхозсенче, уйрăмах юлса пыракан колхозсенче авăн çапма, çапнă тырра типĕтсе тата тасатса хатĕрлев пунктне леçме васкамаççĕ. Хăшпĕр колхозсенче çав-çавах тырра ытларах колхозра тытса усрама тăрăшнă тĕслĕхсем те пур.

Государствăна тырă памалли плана тултарма халĕ пур условисем те пур. Çав условисемпе туллин усă курса кашни район, кашни колхоз, кашни уйрăм хуçалăх тăрăх çывăх кунсенчех государствăна тырă парса татмалла.

Государство умĕнче пысăк парăмлă район

СĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XXIV-мĕш Пленумĕ йышăннă решение Сĕмĕрле районĕ пурнăçа кĕртеймерĕ. Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне район государствăна тырă памалли плана 72,9 процент çеç тултарчĕ.

Район государствăна тырă памалли плана тултарманнин сăлтавĕ мĕнре-ха? Тӳрех калас пулать, кунта государствăна памалли тырра юриех хатĕрлев пунктне ямасăр тытса тăраççĕ. Мăн Улхаш ял Советĕнчи «Красноармеец» колхозăн государствăна тата 65 тонна тырă памалла. Колхоз председателĕ Н. Сычев юлташ ăна парса татма васкамасть-ха. Колхозăн амбарĕсенче çапса тасатнă 25 тонна вика выртать. Кунта тĕштырăсене пухса кĕртнĕ чухне тырра çулса тăкнă та пухса кĕртесси, çапасси пирки нимĕн те шутламан. Çапла 150 гектар çинче çавăн пек çулса пăрахнă тырă пĕтĕмпех юр айне юлнă.

«Ударник» колхозăн государствăна тата 34 тонна тырă памалла. Колхозăн хирĕсенче тырă лайăх пулнă, анчах ăна вăхăтра пухса кĕртмесĕр нумай тăккаласа пĕтернĕ. Пухса кĕртнине те çапса государствăна пама васкамаççĕ-ха.

Çавăн пекех Буденный ячĕпе тăракан колхозăн 26 тонна, «Лесной огонек», «Новая жизнь» колхозсен 20-шер тонна тырă памалла. Çак пысăк парăма район хăвăрт парса таттăр тесе, ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ тата наркомзагăн уполномоченнăйĕ тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ-ха.

Районра çĕрулми парас ĕç те чăтма çук юлса пырать. Плана колхозсем тăрăх 29 процент, уйрăм хуçалăхсем тăрăх 49 процент çеç тултарнă.

Кунта татăклă улшăну кирлĕ. Государство умĕнчи парăма хăвăрт татмалла.

Е. ВОЛКОВ.

КАШНИ СЫСНА АМИНЧЕН 19 ÇУРĂ

Вăрмар районĕнчи Кивĕ Шулханти «Смычка» колхозăн сысна ферми (заведующийĕ Г. Шнуров юлташ) районра лайăх ĕçлекен фермăсенчен пĕри пулса тăрать. Кăçал фермăри 20 сысна аминчен 383 çурă илнĕ, вĕсене пурне те пăхса çитĕнтернĕ.

СССР Верховный Советне суйлама Шупашкар хулинче суйлав участокĕсем тăвасси çинчен

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совет Исполкомĕ йышăннă решени

«СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 27-мĕш, 28-мĕш, 29-мĕш, 30-мĕш тата 34-мĕш статьисем тăрăх Шупашкар хулинче СССР Верховный Советне суйлама çакăн пек суйлав участокĕсем тăвас:

1-МĔШ СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—хĕрачасен 2-мĕш номерлĕ шкулĕ, Çĕнĕ урам, 22-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Ленин урамĕ—20-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 15-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен, 2-мĕш Овражнăй урам, Овражнăй переулок, Плеханов урамĕ—44-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 45-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен, Заводской урам—15-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 18-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен. Çĕнĕ урам, Тургенев урамĕ, Володарский урамĕ—29-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 32-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен, Больничнăй переулок, Кирпичнăй урам, Строительнăй урам, Поперечно-Новăй урам, Волгострой урамĕ, Ипподром, Супăнь завочĕ, 2-мĕш Герцен урамĕ—1-мĕш çуртран пуçласа 27-мĕш çурта çитиччен, Малăй переулок.

2-МĔШ СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—арçын ачасен 2-мĕш шкулĕ, Чувашски урам, 22-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Чувашски урам—22-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 33-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен, Водопроводнăй урам, Водосвет поселокĕ, Красноармейки урам, Безымяннăй переулок, Автономи урамĕ, Трудовой урам, Односторонка урамĕ, Заводской переулок, 1-мĕш Овражнăй урам, Дегтярев переулокĕ, Винокуров урамĕ, Алатырски урам, Сундырски урам, Ядрински урам, Октябрĕн 25-мĕш урамĕ, Герцен урамĕ—62-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 65-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен.

3-МĔШ СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—хула больници çурчĕ, Чувашски урам, 20-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: хула больници тата ачасен больници.

4-МĔШ СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—партстационар çурчĕ, Чувашски урам, 10-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: туберкулез диспансерĕ, партстационар.

5-МĔШ СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—Чăвашторг çурчĕ, Ленин урамĕпе Заводской урамĕн кĕтессинчи 11/18-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Свердлов урамĕ, Свердлов переулокĕ, Трубнăй овраг, Герцен урамĕ—1-мĕш çуртран пуçласа 63-мĕш çурта çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 60-мĕш çурта çитиччен, Речной переулок, Заводской урам — 1-мĕш çуртран пуçласа 13-мĕш çурта çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 16-мĕш çурта çитиччен, Ленин урамĕ—4-мĕш çуртран пуçласа 18-мĕш çурта çитиччен тата 7-мĕш çуртран пуçласа 13-мĕш çурта çитиччен, Чернышевский урамĕ, 2-мĕш Герцен урамĕ—2-мĕш çуртран пуçласа 34-мĕш çурта çитиччен.

6-МĔШ СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—Центральнăй библиотека çурчĕ, Чувашски урам, 6-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Чернышевский урамĕ, Аптечнăй урам, Канаш урамĕ, Чувашски урам—1-мĕш çуртран пуçласа 31-мĕш çурта çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 18-мĕш çурта çитиччен, Освод урамĕ, Союзнăй урам, Перевознăй урам, Р. Люксембург урамĕ, Театр урамĕ, Пристань переулокĕ, Луговой урам—1-мĕш çуртран пуçласа 15-мĕш çурта çитиччен, Октябрьски урам—1-мĕш çуртран пуçласа 7-мĕш çурта çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 12-мĕш çурта çитиччен, Кайбулка хĕрри урамĕ—1-мĕш çуртран пуçласа 17-мĕш çурта çитиччен. Кадыков урамĕ—5-мĕшпе 7-мĕш çуртсем.

7-МĔШ СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—Уполнаркомзаг çурчĕ, Кадыков урамĕ, 19-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Нагорнăй урам, Поперечно-Нагорнăй урам, Кадыков урамĕ—9-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 14-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен, Октябрьски урам—9-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен, 14-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен, Луговой урам—2-мĕш çуртран пуçласа 14-мĕш çурта çитиччен, Халтурин переулокĕ, Слесарнăй овраг, Восточнăй урам, Максим Горький урамĕ, К. Либкнехт урамĕ, Гоголь урамĕ, Горнăй переулок, Набережная Волги урамĕ, Рыбацкая слобода, Волжски урам, НКВД-ăн ача-пăча колонийĕ, «Крестьянин» завод, Нефтесклад, Резина завочĕ.

8-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ — Трахоматознăй институт çурчĕ, Канашски урам, 27-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Трахоматознăй институт, хула больницин хирурги отделенийĕ тата вендиспансер.

9-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—хĕрачасен 3-мĕш шкулĕ, Калинин урамĕ, 23-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Калинин урамĕ—11-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 20-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен. Садовăй переулок, Энгельс урамĕ, Комсомол 15 çул тултарă ятпа тăракан урам, Чебоксарски урам, Детски переулок, Кайбулка хĕрри урамĕ—19-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен, тата 20-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен. Казански урам, Мичурин урамĕ, Лысенко урамĕ, Демченко урамĕ, МОПР урамĕ, Учительски урам, Учительски переулок.

10-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—Пионерсен çурчĕ, Карл Маркс урамĕ, 11-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Ярославский урамĕ — 1-мĕш çуртран пуçласа 41-мĕш çурта çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 36-мĕш çурта çитиччен, К. Маркс урамĕ—1-мĕш çуртран пуçласа 25-мĕш çурта çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 30-мĕш çурта çитиччен. Плеханов урамĕ—1-мĕш çуртран пуçласа 13-мĕш çурта çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 18-мĕш çурта çитиччен, Типографи переулокĕ, Володарский урамĕ—1-мĕш çуртран пуçласа 9-мĕш çурта çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 14-мĕш çурта çитиччен, Дзержинский урамĕ — 1-мĕш çуртран пуçласа 19-мĕш çурта çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 18-мĕш çурта çитиччен, Хĕрлĕ площадь, Кайбулка хĕрри урамĕ—2-мĕш çуртран пуçласа 18-мĕш çурта çитиччен, Кадыков урамĕ—2-мĕш çуртран пуçласа 12-мĕш çурта çитиччен тата 1-мĕшпе 3-мĕш çуртсем, Калинин урамĕ—1-мĕш çуртран пуçласа 31-мĕш çурта çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 18-мĕш çурта çитиччен.

11-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—чăвашла вăтам шкул, Ленинградски тата Володарский урамĕсен кĕтессинчи 27/17-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Ленинградски урам—1-мĕш çуртран пуçласа 23-мĕш çурта çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 32-мĕш çурта çитиччен, Урицкий урамĕ — 1-мĕш çуртран пуçласа 31-мĕш çурта çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 46-мĕш çурта çитиччен, Ворошилов урамĕ—1-мĕш çуртран пуçласа 37-мĕш çурта çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 34-мĕш çурта çитиччен, Плеханов урамĕ — 15-мĕш çуртран пуçласа 43-мĕш çурта çитиччен тата 20-мĕш çуртран пуçласа 34-мĕш çурта çитиччен, Володарский урамĕ—11-мĕш çуртран пуçласа 27-мĕш çурта çитиччен тата 16-мĕш çуртран пуçласа 30-мĕш çурта çитиччен, Дзержинский урамĕ—21-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 22-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен, Марат переулокĕ. Ленин урамĕнчи 1-мĕшпе 3-мĕш тата 5-мĕш çуртсем.

12-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ — Пожарниксен клубĕ, К. Маркс урамĕ, 45-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Кузнечнăй урам—15-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 16-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен, Ворошилов урамĕ—39-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 36-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен, Односторонка-Горшечнăй урам, Урицкий урамĕ — 33-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 48-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен, Ленинградски урам—25-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 34-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен, Военнăй городок, Интернациональнăй урам, Осоавиахим урамĕ, Кооперативнăй урамри 8-мĕшпе 9-мĕш çуртсем.

13-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—Электротехникум çурчĕ, К. Маркс урамĕ, 82-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: К. Маркс урамĕ—27-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 32-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен, Ярославский урамĕ—43-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 38-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен, Кузечнăй урам—1-мĕш çуртран пуçласа 13-мĕш çурта çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 12-мĕш çурта çитиччен, Кооперативнăй урам — 1-мĕш çуртран пуçласа 5-мĕш çурта çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 6-мĕш çурта çитиччен, Спортивнăй урам, Шевченко урамĕ, Трактовăй переулок, Çулăн 17-мĕш дистанцийĕ, Шупашкар чугун çул станцийĕнчи поселок, чугун çул станцийĕнчи электростанципе водокачка.

14-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—арçын ачасен 1-мĕш шкулĕ, Ярославскипе Кузнецнăй урамсен кĕтессинчи 54-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Пушкин урамĕ, Базарнăй урам, Колхознăй урам, Пионерски урам, Металлистсен переулокĕ, Байдуков урамĕ, Бассейнăй урам, Студенчески урам, Чапаев урамĕ, Белинский урамĕ, Ярморка урамĕ, Ярморка площачĕ, Маяковский урамĕ, Вокзальнăй урам, Железнодорожнăй урам, Красофлотски урам, Пивильски урам.

15-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—Росглаввино кантурĕн çурчĕ, Коммунальная слобода урамĕ, 27-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Коммунальная слобода урамĕ, Совхознăй урам, Рылеев переулокĕ, Граждански урам, Добролюбов урамĕ, Тельман урамĕ, Куйбышев урамĕ, Киров площачĕ, Островский урамĕ, Чайковский урамĕ, Толстой урамĕ, Ломоносов урамĕ, Тимирязев урамĕ, Шмидт урамĕ, Полевой урам, Лермонтов урамĕ, Некрасов урамĕ, Сугут урамĕ, Мельтрест ферми тата столовăйсен тресчĕн ферми.

16-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—ача çуратмалли çурт, Ярославский урамĕ, 42-мĕш çурт).

Ку суйлав участокне ача çуратмалли çурт кĕрет.

17-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—Амбулатори пулнă çурт, Чапаев рабочи поселокĕ).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Теплофикаци баракĕ, 13-мĕш, 14-мĕш, 15-мĕш, 16-мĕш, 17-мĕш, 18-мĕш, 19-мĕш, 20-мĕш бараксем, Пожарнăй депо, 4-мĕш чулçурт, столовăй пулнă çуртри общежити, стахановецсен общежитийĕ, больница, 1-мĕшпе 2-мĕш йывăç çуртсем, Торжковпа Макаров çурчĕсем.

18-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—клуб çурчĕ, Чапаев рабочи поселокĕ).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: клуб, 3-мĕш, 4-мĕш, 5-мĕш, 6-мĕш, 7-мĕш, 8-мĕш, 1/22-мĕш, 2/22-мĕш йывăç çуртсем, 24-мĕш, 26-мĕш, 25-мĕш, 30-мĕш, 31-мĕш, 26-мĕш, 8-мĕш, 9-мĕш, 10-мĕш, 11-мĕш тата 22-мĕш бараксем, подсобнăй хуçалăхăн çурчĕсем, Грабарсен поселокĕ, Лесник çурчĕ, Гаранинпа Ленков çурчĕсем, 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш, 5-мĕш, 6-мĕш чул çуртсем, Комсомольски поселокри 5-мĕшпе 7-мĕш бараксем.

19-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—завод клубĕ, Сосновка рабочи поселокĕ).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Луговой урам, Киров урамĕнчи 40-мĕш çурт, Заводски урам, Школьнăй переулокри мăшăрлă мар енчи çуртсем, Кузнечнăй урам, Кузнечнăй переулок, Приверх пристанĕ.

20-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—2-мĕш тулли мар вăтам шкул çурчĕ, Сосновка рабочи поселокĕ).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: К. Маркс урамĕ, Киров урамĕ—1-мĕш çуртран пуçласа вĕçне çитиччен тата 2-мĕш çуртран пуçласа 38-мĕш çурта çитиччен, Октябрьски урам, Нагорнăй урам, Сосновăй переулок, Ленин урамĕ, Атăл леш енчи электростанцин пурăнмалли поселокĕ, Первомайски урам, Химартель, Сосновкăри вăрман завочĕ, Криушири вăрман участокĕ, Октябрьски вăрман участокĕ, Чернăй шывĕ çинчи вăрман участокĕ, Школьнăй переулокри мăшăрлă çуртсен енĕ.

21-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—7-мĕш номерлĕ пуçламăш шкул, Лебедински вăрман участокĕ).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Пихтулино дачинчи 14-мĕш кварталти поселок, Акăшкӳл дачинчи 13-мĕш кварталти поселок, Химлесхоз поселокĕ, Куйбышев ячĕпе тăракан артель поселокĕ, Красный столб вăрман участокĕ, 17-мĕш кварталти вăрман участокĕ, Пролетарски вăрман участокĕ, Лебедински вăрман участокĕ, Изьярски вăрман участокĕ, Березовăй вăрман участокĕ, Прямодорожнăй вăрман участокĕ, 55-мĕш, 56-мĕш, 57-мĕш кварталсенчи вăрман участокĕсем, Акăшкӳл дачи.

22-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ (центрĕ—Атăл леш енчи торф предприятийĕн столовăйĕ).

Ку суйлав участокне çаксем кĕреççĕ: Атăл леш енчи торф предприятийĕн поселокĕ, Шупашкар вăрман хуçалăхĕн поселокĕ, Кувшинка вăрман участокĕ, Приволжски вăрман промхозĕн вăрман участокĕ, республикăри пионерсен лагерĕ пулнă çуртсем, учительсен канмалли çурчĕ, Атăл леш енчи ача-пăча санаторийĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар Хула Совет Исполкомĕн Председателĕ П. АНИКИН.

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар Хула Совет Исполкомĕн Секретарĕ Л. МЫШКИНА.

1945 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕ.

СССР КОНСТИТУЦИЙĔ ÇИНЧЕН КАЛАÇУСЕМ

Советлă социализмлă общество

Юлашки. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 226-мĕшĕпе 231-мĕш номерĕсенче.

ПИРĔН ОБЩЕСТВĂН КЛАСС ТĔЛĔШĔНЧИ СОСТАВĔ

Халĕ пирĕн общество мĕнле классенчен тăнине пăхса тухар.

1939 çулхи перепись тăрăх, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхăн çур пайĕ рабочисемпе служащисем (çемьисемпе пĕрле) пулнă, çуррипчен сахалрах пайĕ вара—хресчен-колхозниксем тата кооперативсене пĕрлешнĕ алăстаçсем пулнă. Уйрăм хуçалăхпа пурăнакан хресченсемпе хăйсен килĕсенче ĕçлекен алăстаçсем те пулнă. Вĕсем хăйсен хуçалăхĕнче ĕçленĕ, урăх çынсене тара тытса ĕçлетерсе эксплоатацилемен. Вĕсем (хăйсен çемьисемпе пĕрле) мĕнпур халăхăн 2,5 процентĕ чухлĕ пулнă.

Çапла ĕнтĕ, пирĕн общество икĕ класран—рабочи класпа хресченсенчен тăрать. Çавăн пекех пирĕн обществăра интеллигентсем те пур, вĕсем рабочисемпе хресченсен речĕсенчен тухнă çынсем пулаççĕ. Пирĕн общество пĕр ĕçсыннисенчен çеç тăрать. Çав ĕçсыннисен чи ытларахăш пайĕ социализмлă хуçалăхра—государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсенче е кооперацие колхоз предприятийĕсенче ĕçлет. Пирĕн обществăра эксплоататорла классем çук, пирĕн çĕршывра çынна çын эксплоатацилесе пурăнмасть. Çакă ĕнтĕ пирĕн общество социализмлă общество пулнине пĕлтерет.

Октябрьти социализмлă аслă революци хыççăн пирĕн çĕршыври рабочи класпа хресченсем тĕпренех улшăнчĕç.

ПИРĔН ОБЩЕСТВĂРИ КЛАССЕМ ТĔПРЕН УЛШĂННИ

Совет рабочийĕсемпе совет хресченĕсем вĕсем—патша Российĕнчи классем пек мар, пачах урăхла.

Совет рабочийĕсем вĕсем текех пролетариат мар. Капитализмлă Российăра рабочисем пусмăрта пурăнакан, эксплоатациленекен классем пулнă, вĕсен нимĕнле ĕç хатĕрĕ те пулман, вĕсем хăйсен ĕç вăйне пуян çынсене сутнипе çеç тăранса пурăннă.

Пирĕн рабочисем халĕ ирĕклĕ рабочи класс пулса тăраççĕ. Вĕсем пĕтĕм халăхпа пĕрле ĕç хатĕрĕсене, çĕршыври мĕнпур пуянлăхсене тытса тăраççĕ. Пирĕн çĕршыври рабочисем ĕçсĕрлĕхпе выçлăха пĕлмеççĕ, вĕсем пирĕн çĕршывра социализмлă хуçалăх организациленĕ, вĕсем совет обществине ертсе пыраççĕ.

Совет Союзĕнчи рабочи класс вăл, —тенĕ Сталин юлташ,—«эксплоатацирен ирĕке тухнă пачах та çĕнĕ рабочи класс пулса тăрать, этемлĕх историйĕ ку таранччен çавăн пек класа пĕлмен-ха».

Совет хресченĕсем вĕсем—текех хăйсен вак хуçалăхне тытса тăракан пĕчĕк хуçасем мар. Капитализмлă Российăра хресченсем хăйсен уйрăм мĕскĕн те вак хуçалăхĕсенче авалхи техникăпа ĕçлесе пурăннă. Вĕсене помещиксемпе кулаксем, купецсем ним хĕрхенмесĕр эксплоатациленĕ, вĕсем мĕнпур çĕршывĕпех миллионĕ-миллионĕпе ĕç шыраса çӳренĕ.

Совет хресченĕсене халĕ ĕмĕрхи эксплоататорсенчен тата кирек епле эксплоатацирен те ирĕке кăларнă. Совет хресченĕсем пĕтĕмпех тенĕ пекех коллективлă шултăра хуçалăха, социализмлă хуçалăха пĕрлешнĕ. Вĕсем хăватлă çĕнĕ техникăпа—тракторсемпе, комбайнсемпе тата ытти тĕрлĕ машинăсемпе ĕçлеççĕ. Вĕсен тырпулпа вăрлăх запасĕсем, йышлă выльăх-чĕрлĕх пур.

Çирĕм миллиона яхăн чухăн, колхоза кĕрсе, кĕлмĕçлĕхрен, пачах пурлăхсăр тăрса юлассинчен хăтăлчĕç, кулак пусмăрĕнчен çăлăнчĕç, колхоза пула йĕркеллĕ пурăнакан çынсем пулса тăчĕç. Совет хресченĕсене колхоз пуян та культурăллă пурнăç тумалли çул уçса пачĕ. Пирĕн халĕ çулран-çул миллионшар тенкĕ-тупăш илекен колхозсем те пур. Колхоз-миллионерсен хисепĕ çулран-çул ӳссе пырать.

Совет Союзĕнчи хресченсем вĕсем, —тенĕ Сталин юлташ,—«пачах та çĕнĕ хресченсем, ун пек хресченсене этемлĕх историйĕ ку таранччен пĕлмен-ха».

Совет çĕршывĕнчи интеллигенци тĕпренех улшăнчĕ.

Пĕр государство та хăйĕн интеллигенцийĕсĕр пурăнма пултарайман, малашне те пурăнма пултараймас çук. Рабочисемпе хресченсен социализмлă государстви те, çапла ĕнтĕ, хăйĕн интеллигенцийĕсĕр тытăнса тăма пултараймасть.

Капитализмлă Российăра интеллигентсен йышĕ пуринчен ытларах пуянрах классенчен тухнă çынсен шучĕпе хутшăнса пынă. Хăйсем мĕнле класран тухни тăрăх, хăйсен обществăри çыхăнăвĕсем тăрăх тата хăйсен шухăш-кăмăлĕ тăрăх патша Российинчи интеллигентсен ытларах пайĕ эксплоататорла классене çывăхрах пулнă. Вăл вĕсене усă парас тесе ĕçленĕ.

Совет интеллигенцийĕ хăйĕн мĕнпур тымарĕсемпе рабочи класпа тата хресченсемпе çыхăнса тăрать, вăл халăхшăн ĕçлет. Халĕ ĕлĕкхи Российăра вĕренсе тухнă интеллигенцин представителĕсем те халăхшăн тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеççĕ. Пирĕн совет интеллигенцийĕ рабочисемпе тата хресченсемпе пĕрле Совет государствине çирĕплетес, хамăрăн социализмлă обществăна çирĕплетсе малалла аталантарас тĕлĕшпе хĕрӳллĕн ĕçлет. Çакă ĕнтĕ пачах та çĕнĕ, ĕçлекен интеллигенци, ун пек интеллигенци урăх пĕр çĕршывра та çук.

Çакăн пек ĕнтĕ Совет влаçĕ вăхăтĕнче пулнă пирĕн обществăри ĕçсыннисен класĕн тата интеллигенцин тĕп улшăнăвĕсем.

РАБОЧИСЕМ, ХРЕСЧЕНСЕМ, ИНТЕЛЛИГЕНЦИ ПĔР-ПĔРИНПЕ КИЛĔШТЕРСЕ ТУСЛĂН ĔÇЛЕНИ

Пирĕн ĕçсыннисенчен çеç тăракан обществăра çапах та икĕ класс—рабочисемпе хресченсем пулнине мĕнпе ăнлантарса памалла-ха?

Çакна акă мĕнпе ăнлантарса памалла: пирĕн çĕршывра социализмлă харпăрлăхăн икĕ форми, социализмлă предприятисен икĕ форми пур. Ун çинчен эпир маларах тĕплĕн каласа патăмăр. Пирĕн обществăри çынăн положенине унăн кулленхи интересĕсем кăтартса параççĕ. Вăл государство предприятийĕнче е учрежденийĕнче рабочи е служащи пулса ĕçлет, е вăл колхозра член пулса ĕçлесе хăйне пурăнма кирлĕ продуктсене коллективлă хуçалăх тупăшĕнчен илсе тăрать. Пирĕн общество икĕ класа—рабочисемпе хресченсене уйрăлса тăни çакăн çинче ирĕксĕрлесе тăрать.

Анчах та çав классем уйрăм классем пулин те, вĕсем пĕр-пĕринпе туслă пурăнаççĕ. Вĕсем хăйсене ирĕке кăларассишĕн пĕрле кĕрешрĕç, хăйсен тăшманĕсене пĕрле çĕнтерчĕç, çĕнĕ, социализмлă обществăна пĕрле туса хучĕç. Хресченсем уйрăм хуçалăхсенчен коллективлă хуçалăха куçнă хыççăн, социализмлă производство ĕçне хутшăнма тытăнчĕç; вĕсем тунă колхозсем социализмлă пĕрлĕхлĕ халăх хуçалăхĕн уйрăлми пайĕ пулса тăчĕ. Хресченсен интересĕсем пурнăçри пур ыйтусем тĕлĕшпе те рабочисен интересĕсем пекех. Вĕсен тĕллевĕсем те пĕр-пекех: вĕсем советлă Тăван çĕршывăн вăйĕпе хăватне çирĕплетме, фашизма тĕпренех пĕтерсе тăкма, халăхсем хушшинче çирĕп мир туса хума тăрăшаççĕ, вĕсем хамăрăн пурнăçа пуянрах та культурăллăрах тăвас тесе пĕрле ĕçлеççĕ. Пирĕн интеллигенци те рабочисемпе тата хресченсемпе килĕштерсе ĕçлет.

Хăвăрăн шухăшăрпа хамăрăн çĕршывăн пĕр вĕçĕнчен пуçласа тепĕр вĕçне çитиччен пăхса тухăр-ха. Эсир вара пирĕн социализмлă общество рабочисен, хресченсен, интеллигенцин пĕр-пĕринпе килĕштерсе туслăн ĕçленин çав тери уçăмлă картинине куратăр. Эсир пирĕн халăх мĕн тери пĕр шутлине, миллионшар-миллионшар совет çыннисем, пĕр-пĕрне тăванла пулăшса, пĕр пĕтĕмĕшле аслă ĕç тунине куратăр. Кунта пĕрисем—ĕçхатĕрĕсемпе, теприсем—наука тĕлĕшпе тĕпчевсем тунипе, виççĕмĕшсем—çине тăрсах тăрăшса вĕреннипе, тăваттăмĕшсем тата алла хĕçпăшал тытса çапăçнипе государство ĕçне туса пыраççĕ.

СОВЕТ ОБЩЕСТВИН МОРАЛЬПЕ ПОЛИТИКА ТĔЛĔШĔНЧИ ПĔРЛĔХĔ

Совет çыннисен интересĕсем, шухăш-кăмăлĕсемпе тĕллевĕсем тĕпренех пĕрлĕхлĕ пулнине, вĕсем совет правительствипе коммунистсен партийĕ тавра пĕтĕçнине эпир совет халăхĕн моральпе политика тĕлĕшĕнчи пĕрлĕхĕ тесе калатпăр. Ăçтан тухса тăрать-ха çав пĕрлĕх?

Çак пĕрлĕхе сасартăках туса хуман. Советлă ялта уйрăм хресченсен вак хуçалăхĕ пуçпулса тăнă вăхăтра мĕнпур совет халăхĕн çакăн пек пĕрлĕх пулман. Вăл пирĕн хресченсем социализм строительствине ытларах та ытларах хутшăнса пынă май, хресчен-колхозниксем хăйсен интересĕсем рабочисен интересĕсемпе, мĕнпур халăхăн, Совет государствин интересĕсемпе пĕрле пулнине ăнланса пынă май ерипен аталанса пынă.

Çапла ĕнтĕ, совет халăхĕн моральпе политика тĕлĕшĕнчи пĕрлĕхĕ пирĕн обществăн экономикăллă никĕсĕн пĕрлĕхĕ çинче, совет çыннисен чи ытларахăш пайĕ социализмлă пĕрлĕхлĕ хуçалăхăн работникĕсем пулнинче никĕсленсе тăрать.

Акă мĕн çинче çитĕннĕ ĕнтĕ советлă социализмлă обществăн моральпе политика тĕлĕшĕнчи пĕрлĕхĕ. Рабочисем, хресченсем, интеллигенци социализмлă мирлĕ строительство вăхăтĕнче те, çавăн пекех тата Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче те пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленĕ пирки çав пĕрлĕх татах та ытларах çирĕпленчĕ.

Пирĕн обществăн моральпе политика тĕлĕшĕнчи пĕрлĕхĕ çавăн пекех тата совет халăхĕн пĕрлĕхĕпе туслăхĕнче те палăрса тăрать. Вăл совет патриотизмĕн ĕмĕр иксĕлми çăлкуçĕ пулса тăрать. Вăл Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче татах та уçăмлăрах палăрчĕ.

Моральпе политика тĕлĕшĕнчи пирĕн пек пĕрлĕх капитализмлă пĕр обществăра та çук, пулма та пултараймасть. Унта рабочисемпе капиталистсем хушшинче, хресченсемпе помещиксем хушшинче, эксплоатацилекенсемпе эксплоатациленекенсем хушшинче ĕмĕр килĕшми кĕрешӳ пырать.

Советлă социализмлă общество капитализмлă обществăран шăпах çак моральпе политика тĕлĕшĕнчи пĕрлĕхпе тĕпрен уйрăлса тăрать.

Рабочисем, хресченсем, интеллигенци пĕр-пĕринпе туслăн килĕштерсе ĕçлени, совет обществин моральпе политика тĕлĕшĕнчи пĕрлĕхĕ Совет Союзĕн çирĕплĕхĕпе хăватлăхĕн ĕмĕр иксĕлми тĕп çăлкуçĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Совет халăхĕн моральпе политика тĕлĕшĕнчи пĕрлĕх пĕтĕм халăх пирĕн çĕршывăн руководительне Сталин юлташа юратнинче уйрăмах уçăмлăн та вăйлăн палăрса тăрать.

В. КАРПИНСКИЙ.

Нимĕçсен вăрçă пуçланăшăн айăплă тĕп преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд туни

НОЯБРĔН 29-мĕшĕнчи КАÇХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Америка енчен айăплакан панă документсем трибунала Германирипе Австрири фашистсем Австрие тытса илес ĕçе мĕнле хатĕрленнине лайăх пĕлме май панă.

Малалла илсе кăтартнă документсем ун хыççăн пулнă хăрушă событисене питĕ уççăн та ĕненмелле кăтартса параççĕ. Зейсс-Инкварт, тĕрлĕ майлă хăтланса, Австрие шалти ĕçсен министрĕ пулса тăнă. Руководитель вырăнĕнче ĕçлени ăна Австрири гитлеровецсене ертсе пыма май панă.

Мартăн 10-мĕшĕ тĕлне Австрире переворот тума йăлтах хатĕрленсе çитнĕ. Мартăн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Австрие Гитлер патĕнчен гаулейтер Глобочник таврăннă. Вăл çапла каласа панă: Гитлер Австрири фашистсене хăйсем тăвас тенĕ пек тума «ирĕк пачĕ», тенĕ.

Австрие тытса илме фашистла Германин центрĕнче те питĕ вăйлă хатĕрленнĕ. Айăплакан çапла калать: çав чи кирлĕ вăхăтра Риббентроп Берлинра пулман пирки (вăл ун чухне Лондонра пулнă), Австрие тытса илес ĕçе халь айăплакансен тенкелĕ çинче ларакан Нейрата активлăн хутшăнтарнă. Нейрат ун чухне Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă. Гитлер Муссолинине яма çыру çырса хатĕрленĕ, унта вăл хăй Австрие кĕрсе кайма шутлани çинчен каланă. Айăплакан Иодль çырса хунă хутсем, айăплакан вуласа кăтартнăскерсем, çав ĕçсем пулас умĕн гитлерла аркатуçăсен штабĕнче мĕн тунине лайăх кăтартса параççĕ. Мартăн 10-мĕшĕнче Иодль хăйĕн дневникĕнче çапла çырса хунă: канцлер Шушниг кĕтмен çĕртен халăхран ыйтса пĕлме хушрĕ. «Фюрер çапла тума парасшăн мар», тенĕ. Унăн дневникĕнчен малалла çакă курăнать: çав çĕрех Гитлер хăй патне Геринга, Кейтеле тата ытти çар çыннисене чĕнсе илнĕ.

Мартăн 10-мĕшĕнче каçхине 6 сехет те 30 минутра Иодль хăйĕн дневникĕнче çапла çырса хунă: Гитлер 8-мĕш армие тата ытти чаçсене мобилизацилеме приказ пачĕ, тенĕ.

Ĕç, çапла ĕнтĕ, сарăлса ӳссе пынă. Олдермен трибунала пĕр документ парать. Çав документ фашистла каварлашуçăсен малалли ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларать. Çав документ—Гитлер Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен командующийĕсене питĕ вăрттăн панă директива. Ăна «Отто» операцийĕ çинчен тесе ят панă. Австрие тытса илме малтанах хатĕрленсе хунине çав сăмахпа пытарса, вăрттăнлатса хунă. Çав документра Гитлер намăссăрланса çапла калать: «Ытти мерăсем ăнăçлă пулмасан, эпĕ Австрие вăйпа пырса кĕресшĕн», тет. Çак ирсĕр ĕçе тăвакансене Гитлер Австрие мирлĕн пырса кĕнĕ пек кĕме хушнă, çарсем Австрие пырса кĕнине халăх саламланă пек пултăр, тенĕ.

Малалли ĕçсем мĕнле пулса пынине кăтартмашкăн эпĕ трибунала виçĕ отчет вуласа паратăп, тет айăплакан Олдермен. Вăл отчетсем пĕр-пĕринчен хăшпĕр енчен çеç уйрăлса тăраççĕ. Олдермен чи малтан суда Австрири гитлеровецăн Райнерăн Австрин суверенитетне мĕнле майпа пĕтерсе лартни çинчен çырнă отчета вуласа парать.

Унтан айăплакан Олдермен Австрие тытса илес ĕçпе çыхăнса тăнă ытти ĕçсем çинчен калать. Вĕсем çинчен вăл Геринг телефонпа калаçнă чух каланă сăмахсем тăрăх каласа парать. Çав сăмахсене, Геринг хăй хушнă тăрăх, сывлăш-çар вăйĕсен штабĕн сотрудникĕсем çырса хунă.

Трибуналăн ноябрĕн 29-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕнче Америка енчен айăплакан Олдермен Герингăн телефонпа каланă сăмахĕсене вуласа парать. Вăл сăмахсене Геринг Германири фашистсем Австрие тытса илнĕ вăхăтра каланă. Геринг телефонпа каланă сăмахсем Австрири Квислинг пулса тăракан Зейсс-Инкварт сутăнчăк хăйĕн çĕршывне Германири фашистен аллине панине питĕ лайăх кăтартса параççĕ. Вĕсем тата гитлерла Германин руководителĕсем Австрие тытса илес тесе çав тери ирсĕр меслетсемпе усă курнине кăтартса параççĕ. Çакăн хыççăн Олдермен Гитлерăн Германи çарĕсене Австрие кĕрсе кайма хушакан вăрттăн приказне вуласа парать. Австрие оккупацилеме кирлине çав приказ Шушниг Германи ультиматумне йышăнманнипе ăнлантарса панă. Мартăн 12-мĕшĕнче тул çутăлса килнĕ вăхăтра Германи çарĕсем Австри çĕрне кĕрсе кайнă. Айăплакан çапла калать: Гитлер çав вăхăтра Австрие тытса илни çине Итали мĕнле пăхасси пирки питĕ пăшăрханнă, мĕншĕн тесен 1934 çулта Итали, Австрие Германипе пĕрлештерме парас мар тесе, хăйĕн çарĕсене Австри чикки патне илсе пырса тăратнăччĕ. Анчах та унтанпа çак вăхăтчен Итали позицийĕ пĕтĕмпех улшăннă. Çапла, мартăн 11-мĕшĕнче 22 сехет те 25 минутра Германин Римри посолĕ принц Филипп Гессенский Гитлера телефонпа çапла пĕлтернĕ: «Эпĕ халь çеç Муссолини патĕнчен таврăнтăм. Муссолини эпĕ пĕлтернине питĕ туслăн йышăнчĕ. Вăл хăй Сире хисеплени çинчен каласа пама ыйтрĕ. Ăна Шушниг каласа кăтартнă иккен. Вăл Шушнига çапла каланă: нимĕне те улшăнтарма çук. Австрире ман ĕç çук, тенĕ». Гитлер вара Филипп Гессенские çапла каланă: «Пушалстă, Муссолинине эпĕ çакна нихăçан та манас çукки çинчен пĕлтерĕр. Халь Австри ыйтăвне татса панă пирки эпĕ Муссолинипе вута та, шыва та кĕме хатĕр», тенĕ.

Айăплакан çапла калать: Австрие Германи тытса илнĕ пирки пĕтĕм тĕнче тарăхнине пурте пĕлеççĕ. Пĕтĕм тĕнче тарăхнипе, нацистсен ытти çĕршывсем умĕнче хăйсене мĕнле те пулин тӳрре кăлармашкăн васкавлăн мерăсем йышăнмалла пулнă. Айăплакан Олдермен трибунала Геринг çав вăхăтра Лондонра пулнă Риббентроппа (ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе) мартăн 13-мĕшĕнче, Австрие тытса илнĕ хыççăн тепĕр кунне телефонпа калаçнине вуласа парать.

Геринг Риббентропа çапла каланă: Галифакспа Чемберлен патне кайăр та вĕсене Германи Австрие нимĕнле ультиматум та паман, тесе калăр, Шушниг çарăн çинчен пĕлтерни вăл суя сăмах, тейĕр, тенĕ.

Геринг хăй телефонпа калаçнине хăех хут çине çырса хума хушнă. Вăл телефонпа мĕн каланине пĕтĕм тĕнче пĕлĕ тесе нихăçан та шухăшламан пулмалла. Çав документсем Германири фашистсем ют çĕршывсене тапăнмашкăн провокаторла меслетсемпе усă курнине тăрă шыв çине кăлараççĕ.

Австрие тытса илнĕ хыççăн Германири фашистсем законсем кăларма тытăннă. Çав законсене пула вара Австрие пĕтĕмпех чуралантарса лартнă. Австрие тĕрĕссипе илсен мĕншĕн тытса илни çинчен хĕçпăшаллă вăйсен генеральнăй штабĕн начальникĕ Иодль генерал хăйĕн Мюнхен хулинче 1943 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче гаулейтерсене вуласа панă секретлă докладĕнче каласа панă. Айăплакан çав докладран çак вырăна илсе кăтартать: «Австрие Германипе пĕрлештерни пирĕн ĕлĕкхи наци тĕллевне пурнăça кĕртни çеç пулмарĕ, вăл тата пирĕн çар хăватне вăйлăлатма, пирĕн стратегиллĕ позицисене лайăхлатма май пачĕ. Унччен Чехословаки çĕрĕ Германие Франци еннелле савăлланса кĕрсе тăратчĕ, вăл союзниксем валли, уйрăмах та Росси валли, сывлăш-çар бази пулса тăратчĕ. Халĕ Чехословакие хăйне хĕскĕчпе хĕстерсе лартнă. Халĕ унăн хăйĕн стратегиллĕ позицийĕ çав тери начарланса кайрĕ, вăл нимĕн чухлĕ те хирĕç тăраймарĕ».

Айăплакан юлашкинчен çакна палăртса парать: Австрие тытса илсе, Германи Версальти договорăн 80-мĕш статьине тата Сен-Жерменри договорăн 88-мĕш статьине пăснă.

Олдермен хăйĕн сăмахне каласа пĕтернĕ хыççăн Америка енчен айăплакансем, документ вырăнне хурса, Германири концентрациллĕ лагерьсенчи хăрушă пурнăçа ӳкерсе илнĕ фильма кăтартнă.

НОЯБРĔН 30-МĔШĔНЧИ ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Трибуналăн ирхи ларăвне 40 минут кая юлса уçнă. Ларура хӳтĕлекенсемпе айăплакансем пĕр-пĕринпе свидетельсене мĕнле йĕркепе суда чĕнсе илсе вĕсенчен мĕнле йĕркепе ыйтса тĕпчесси пирки тавлашнă. Америка енчен айăплакан Эмин полковник паян эпир трибунала Эрвин Лахузен генерал-майора тата Германин çар разведкипе контрразведкин начальникне Канарис адмирала свидетеле чĕнме шутлатпăр тесессĕн, Кейтеле хӳтĕлекен Отто Нельте ăна хирĕç каланă. Хӳтĕлекенсемпе айăплакансем пĕр-пĕринпе калаçса татăлнă тăрăх, свидетельсене суда чĕниччен сахалтан та пĕр кун малтан вĕсен списокĕсене хӳтĕлекенсене памалла, тенĕ Отто Нельте. Вăл судран: Лахузен свидетеле паянхи ларăва ан чĕнĕр, тесе ыйтнă.

Айăплакансем çапла каланă: эпир хӳтĕлекенсемпе çавăн пек калаçса татăлман, свидетельсене хăрушă ан пултăр тесе, эпир вĕсен списокĕсене хӳтĕлекенсен аллине пама шутламастпăр, тенĕ. Геринга хӳтĕлекен адвокат айăплакансем çав списоксене хӳтĕлекенсене парас мар тенипе хирĕç протестлет, свидетельсен ячĕсене хаçатсене пĕлтернĕ вĕт, тет. Вăл тата çапла калать: айăплакансем хӳтĕлекенсене материалсем памаççĕ, пире панă материалсене акăлчан чĕлхипе çырнă, тет. Айăплакансен представителĕ свидетельсен ячĕсене хаçатсене йăнăшпа пĕлтернине ăнлантарса парать, унтан тепĕр хут çапла калать: свидетельсене хăрушă ан пултăр тесе, эпир вĕсен списокĕсене хӳтĕлекенсен аллине пама шутламастпăр, тет. Вăл малалла çапла калать: хӳтĕлекенсен жалобисем нумайĕшĕ вырăнсăр, мĕншĕн тесен çак судра хӳтĕлекенсем Америкăри судринчен нумай лайăхрах условисенче ĕçлеççĕ, тет. Шахта хӳтĕлекен Дикс (вăл хӳтĕлекенсен пуçлăхĕ пулса тăрать) çапла ăнлантарса парать: свидетельсен списокĕсене хӳтĕлекенсене парасси пирки калаçса татăлнă тесе, манăн юлташсем йăнăш калаççĕ. Ун пек калаçса татăлни пулман, анчах та, ман шутпа, çавăн пек калаçса татăлмалла, тет. Вăл судран айăплакансене çапла тума хушма ыйтать: вĕсем хӳтĕлекенсене, концентрациллĕ лагерьсенчи пурнăçа кăтартакан фильма малтан кăтартнă пек, ытти документсемпе те вăхăтра паллашма май паччăр, тет. Трибунал айăплакансене çапла тума канаш парать: хӳтĕлекенсене мĕн кăтартма май пуррине малтантарах кăтартăр, тет. Лахузен свидетель çинчен калас пулсан, ăна эсир ыйтса тĕпчеме паянхи ларăва чĕнме пултаратăр, тет. Çакăн хыççăн зала Лахузена чĕнсе кĕреççĕ. Айăплакан Эмин ыйтăвĕсене ответлесе, Лахузен çапла калать: эпĕ 1897 çулта Австрире çуралнă, çар шкулĕнчен вĕренсе тухнă, иртнĕ вăрçăра лейтенант пулса çапăçнă, вăрçă хыççăн Австри çарĕнче ĕçлесе пурăннă. 1930 çул тĕлне капитан чинне илнĕ. 1930 çулта генеральнăй штаб академине вĕренме кĕнĕ, унтан 1933 çулта вĕренсе тухнă, вара мана иккĕмĕш дивизие разведка офицерĕ туса янă, çавăн чухнех мана майор чинне панă, 1935 çулта мана генштабăн разведка отделне лартнă. Австрие Германипе пĕрлештернĕ хыççăн Лахузена Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованийĕн разведка отделне куçарнă. Çав отделăн начальникĕ Канарис адмирал пулнă. Лахузена контрразведкăн пĕр отделĕн начальникĕ туса хунă, çав отдел вăрттăн çыхăнусем çинчен хыпарсем пухса тăнă. Лахузен çапла калать: хамăн шеф Канарис мана уйрăмах кăмăллатчĕ, тĕрлĕ канашлусене хăйĕн представителĕ туса яратчĕ, хăйĕн дневникне çырса пыма та мана шанатчĕ, тет. Лахузен час-часах Кейтельпе тата Иодльпе калаçнă. Вăл Гитлер патĕнчи çар канашлăвĕсемпе конференцийĕсенче те пулнă.

Айăплакан Эмин свидетельтен çапла ыйтать: контрразведка отделĕн работникĕсем вăрçă планĕсене пĕлнĕ-и? тет. Çак ыйту çине тӳрех ответ парас вырăнне свидетель çапла калать: разведка работникĕсем Канарис хăй хушнă тăрăх ĕçленĕ, тет. Вăл Канариса тӳрре кăларма тăрăшать, Канарис Польшăпа вăрçтарасшăн пулмарĕ, вăл кирек мĕнле вăрçа та пуçланма парасшăн марччĕ, тет. Свидетель çапла каласан, айăпланакан Гесс кулать.

Эмин Лахузенран çапла ыйтать: Варшава сывăхĕнче Гитлер патĕнче пулнă канашлăва астăватăр-и эсир? тет. Свидетель çапла калать: çав канашлу 1939 çулхи сентябрĕн 12-мĕшĕнче пулнă. Унта Гитлер, Риббентроп, Кейтель, Иодль, Канарис тата Лахузен пулчĕ. Канашлу Гитлер поездĕнче Кейтель йышăнса тăракан купере пулчĕ. Канашлу пуçланас умĕн Канарис Риббентроппа Польшăри политика çинчен канашларĕ. Риббентроп Польшăра нимĕçсемпе Украина националисчĕсен «пăлхавне» организацилеме хушрĕ. Çав пăлхава нимĕçсем кăмăлламан поляксене вĕлерсе пĕтермешкĕн тата поляк халăхĕн пире хирĕç тăрас ирĕкне вăйсăрлатмашкăн тумалла, терĕ. Канарис Кейтельтен çапла ыйтрĕ, тет Лахузен: Варшава хулине сывлăшран тапăнса çĕмĕрме кам хушрĕ? Кейтель çапла ответлерĕ: çавăн пирки тата Польшăри ытти мерăсем пирки те Гитлер Герингпа калаçса татăлнă, çавăнпа эпĕ вĕсем каланине пурнăçа кĕртме кансĕрлеме пултарайман, терĕ. Вăл каланă тăрăх, «Фюрерпа Геринг хăйсем хушнине пурнăçа кĕртни çинчен час-часах телефонпа ыйтса пĕлнĕ».

Эмин çапла ыйтать: çав канашлура Украина националисчĕсемпе çыхăнса ĕçлесси çинчен мĕн каларĕç?

Лахузен ответлет: Кейтель поляксемпе еврейсене çăмăлтарах пĕтерсе тăкмашкăн Украинăри ушкăнсен восстанине организацилесси çинчен Риббентроп каланине тĕрĕслетсе каларĕ, тет.

Эмин: Гитлерпа Иодль çав канашлура пулнă-и?

Лахузен: Гитлерпа Иодль канашлу пĕтсен е пĕтеспе пычĕç. Канарис ăна Хĕвеланăçĕнчи лару-тăру çинчен, Франци вăрçа хатĕрленни çинчен каласа пама пуçларĕ.

Эмин: Франци çинчен мĕн каларĕç?

Лахузен: Франци çинчен Кейтель пӳлĕмĕнче калаçнă, Канарис çапла каласа пачĕ: Франци çарĕ пĕр районра наступлени тума хатĕрленет, терĕ. Çав вăхăтра Гитлер пырса кĕчĕ. Вăл çавăнтах канашлăва ертсе пырас ĕçе хăй аллине илчĕ те çапла каларĕ: Канарис йăнăшать, терĕ.

Лахузен малалла çапла каласа парать: Польшăна тапăнмалли кампание «Гиммлер» тенĕ сăмахпа пытарнă, тет. Айăплакан ыйтнине хирĕç вăл çапла калать: 1939 çулхи çулла контрразведкăра темĕнле тĕлĕнмелле япала пулчĕ. Август уйăхĕн варринче контрразведкăн пĕрремĕш секцийĕ (манăн секци) поляк салтакĕсен формине тата поляк документсене хатĕрлесе, вĕсене Гиммлера пама хушакан приказ илчĕ. Çав приказа Гитлер штабĕ янă. Эпир, Гиммлер ячĕ нумай япалана пĕлтерет пулин те, çав приказ мĕне пĕлтернине пĕлмен.

Эмин: Çав формăпа документсене кам илчĕ?

Лахузен: СД-н (СС-ăн хăрушсăрлăх службин) темĕнле представителĕ, Систятлăскер.

Эмин: Çав формăпа тата документсемпе мĕнле усă курмалла пулнă?

Лахузен: Эпир ăна тĕплĕн пĕлмен, темĕнскер хатĕрлеççĕ пуль тесе çеç шухăшланă.

Эмин: Мĕн хатĕрленине Канарис пĕлнĕ-и?

Лахузен: Польша çарĕсем нимĕç çĕрне тапăнни çинчен пĕрремĕш бюллетень пичетленсе тухсан, эпир тытса илнĕ материалсене куртăмăр. Вăл материалсем Гитлер штабĕ хушнипе Гиммлер валли манăн секци хатĕрленĕ документсем пулчĕç. Канарис çакна пĕлчĕ: концентрациллĕ лагерьсенчен çынсем илсе вĕсене эпир хатĕрленĕ тумтирсем тăхăнтарнă тата эпир хатĕрленĕ документсем панă иккен. Çав çынсем вара чикĕри Грениц ятлă пункта тапăннă. Хостер генерал çав ĕç çинчен тĕплĕрех пĕлме тăрăшрĕ те пĕлеймерĕ.

Эмин: Концлагерьте илнĕ çав çынсене, поляксен формине тăхăннăскерсене, мĕн тунă вара?

Лахузен: Нумай вăхăт иртсен, эпĕ СС группенфюрерĕпе Бюркельпе калаçрăм. Вăл мана çапла каларĕ: çак ĕçе хăрушсăрлăх службинчи çынсен пĕр ушкăнĕ çеç пĕлнĕ, çав çынсене темиçе кун иртсен персе вĕлернĕ, çапла вара çак ĕçĕн историйĕ вĕсемпе пĕрле пĕтсе ларнă, терĕ.

Айăплакан çав свидетельтен ятарласа пухнă канашлура Вейган генерала вĕлересси пирки калаçни çинчен каласа пама ыйтать. Лахузен çапла калать: çав канашлу вăл 1941 çулта хĕл варринче пулнă. Вейгана вĕлерме хушакан приказа Канариса айăпланакан Кейтель панă, вăл приказа пурнăçа кĕртме манăн секцие хушнă. Контрразведка работникĕсем çак приказа пурнăçа кĕртме килĕшмерĕç, тет Лахузен, анчах свидетель çав приказа мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен Кейтель ыйтсан, Кейтель ун çинчен калама хăяйман. Лахузен тыткăна лекнĕ совет çыннисем пирки пухнă канашлу çинчен калама тытăнсан, гитлерла преступленисен питĕ хăрушă страницисем уçăлса каять. Çав канашлу 1941 çулхи июль уйăхĕнче пулнă. Унта Рейнике генерал—Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованийĕн общи отделĕн начальникĕ, хăрушсăрлăх службинче тăнă СС группенфюрер Мюллер, тыткăна лекнĕ çар çыннисем тĕлĕшпе ĕçлекен Брайер полковник тата свидетель Лахузен пулнă.

Çак тĕлĕшпе мĕнле приказсем пулнă? тесе ыйтать айăплакан.

Лахузен: Икĕ йышши мерăсем палăртса хунăччĕ: пĕрремĕшĕ—вырăс комиссарĕсене пурне те вĕлересси, иккĕмĕшĕ — тыткăна лекнĕ çынсене, большевиксем е вĕсем майлă тăракан çынсем тесе, пурпе те персе вĕлересси.

Айăплакан çапла ыйтать: Канариспа пĕрле пулнă çынсенчен халĕ эсĕ çеç чĕрĕ юлнă-и?

Свидетель калать: мансăр пуçне икĕ е виçĕ çын пур, ыттисене пĕлтĕрхи çулла Гитлера тапăнсан персе вĕлернĕ, тет.

Лахузен свидетельтен малалла каçхи ларура ыйтса тĕпчеççĕ.

ФРАНЦИРИ КОММУНИСТСЕМ ФРАНЦИРИ УЧРЕДИТЕЛНĂЙ ПУХĂВА ÇĔНĔ КОНСТИТУЦИ ПРОЕКТНЕ ТĂРАТНĂ

ПАРИЖ, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (Телефон тăрăх ТАСС корреспондентĕнчен). Францири учредительнăй пухури коммунист-депутатсен ушкăнĕ учредительнăй пухура сӳтсе-явма Францин çĕнĕ Конституцин проектне тăратнă. Проектра 14 пай тата 50 статья. Çав проект тăрăх, наци пухăвĕ республикăн аслă органĕ пулса тăрать. Наци пухăвĕ президента 6 çуллăха суйлать. Министерсем пурте хăйсен ĕçне наци пухăвĕ контроллесе тăнипе туса пыраççĕ. Çавăнпа пĕрлех министрсем кашниех хăйсен ĕçĕшĕн наци пухăвĕ умĕнче ответ тытаççĕ. Депутатсем суйлавçăсем умĕнче ответлă пулаççĕ, депутатсене суйлавçăсем каялла чĕнсе илме те пултараççĕ. Проектăн тăваттăмĕш статьинче чиркĕве государствăран уйăрмалла тесе кăтартса панă, çав статьярах çынăн ирĕклĕхне, çуртйĕрсене турткалама илме пултарайманнине, çырусене никам та уçса вулама пултарайманнине, пухусем ирĕклĕ пулмаллине кăтартса панă. Çав статьярах ĕçлĕх правине, кану правине, ĕçлеме пултараймин пулсан, государство пулăшу парассине, çавăн пекех тата тӳлевсĕр вĕрентессине тата суд тăвассине кăтартса панă. Конституци проекчĕн иккĕмĕш статьинче çапла каланă: «Çын ĕçлесе тунă пурлăха никам та туртса илме пултараймасть». 43-мĕш статьяра монополисен харпăрлăхне халăх валли пĕр тӳлевсĕрех туртса илессине кăтартса панă... Çав монополисен ĕçĕнче халăха хирĕç пыман çынсем кăна туртса илнĕ пурлăхшăн тӳлесе шанма пултараççĕ.

ФРАНКОН ФАШИСТЛА КĔТЕВĔСЕН ТИСКЕРЛĔХĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат çапла пĕлтерет: Испанири эмиграцири республикăллă правительствăн сывлăх министрĕ Лейва, пĕр уйăх каярах Испанирен тухса тарнăскер, пресс-конференцире тухса каласа çапла пĕлтернĕ: 1944 çулхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа 1945 çулхи октябрь уйăхне çити Франко правительстви политикăлла шухăшсемшĕн 15.000 çынна персе пăрахнă. Хальхи вăхăтра Испанире политика тĕлĕшĕпе хупса лартнă çынсем 200.000 çитеççĕ. Лейва каланă тăрăх, нимĕçсем Испанири экономикăллă пурнăça халĕ те контроллесе тăраççĕ. Сăмахран, вĕсем хими, автомобиль, авиаци тата моторсем тăвакан промышленноçа контроллесе тăраççĕ.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

Завода хуралта ĕçлеме работниксем кирлĕ.

Пĕчĕк пурăнакан арçынсемпе хĕрарăмсене, 18 çултан пуçласа 55 çула çитнисене илеççĕ.

Илнĕ çынсене укçасăрах тумтир параççĕ, хваттере вырнаçтараççĕ, кунне виçĕ хутчен апат çитереççĕ тата уйăхне 170 тенкĕ укçа тӳлеççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Чапаевский рабочий поселок, Отдел найма и увольнения. Телефоны 6—99 и 0—26.

Завод дирекцийĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — -89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 04018 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. ф. б. 59х42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз